24-мĕш çул тухать. Хакĕ 15 пус.

1942 ФЕВРАЛЬ 17 ЫТЛАРИКУН 40(6065) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔ, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔ ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔ ХАÇАЧĔ.

Кашни комсомолец кроса хутшăнтăр

Профсоюз членĕсемпе комсомолецсен Хĕрлĕ Çар 24 çул тултарнă ятпа пыракан кросĕ сарăлсах пырать. Кроса куллен пиншер комсомолецсемпе союзра тăман çамрăксем хутшăнаççĕ. Старт патĕнче всевобуч подразделенийĕсенчи боецсем, физкультурниксем, учреждениесемпе предприятисенчи, колхозсенчи çамрăксем йĕлтĕрсемпе тăраççĕ. Кашниех кросра мала тухассишĕн тăрăшать. Нумайăшĕ вĕсенчен паха тĕслĕхсем кăтартаççĕ. Вĕсене йĕлтĕрпе çӳрес тĕлĕшпе малтан туса ирттернĕ хатĕрленӳ ĕçĕсем (тренировкăсем, походсем, ăмăртусем) чылай пулăшаççĕ.

Кросс пуçланнăранпа икĕ эрне иртрĕ. Çав вăхăтра пурĕ 49.300 çын кросра пулнă, вĕсенчен 43 пин çын ытла нормăсене панă. Кросс Чкаловски, Елчĕк, Çĕрпӳ, Куславкка, Вăрмар районĕсенче тата Шупашкар хулинче аван пырать. Чкаловски районра 14 кун хушшинче кросра пурĕ 4.197 çын пулнă, вĕсенчен 682 çын комсомолецсем. Ăмăртура пулнисенчен 3.982 çын ГТО тата БГТО нормисене панă. Елчĕк районĕнче кроса 4.119 çын хутшăннă.

Республикăн столицинче — Шупашкар хулинче кросс начар мар иртет. Февралĕн 14-мĕш тĕлне унта 5.516 çын кроса хутшăннă, 5.207 çын ГТО тата БГТО нормисене панă.

Асăннă районсенче тата Шупашкар хулинче кроса комсомолецсем организованно хутшăнаççĕ, союзра тăман çамрăксене ертсе пыраççĕ. Чкаловски, Елчĕк, Çĕрпӳ районĕсенчи комсомолецсен 65 процентĕ кроса хутшăннă, ГТО комплексĕн нормисене панă. Нумай организацисенче комсомолецсем пĕр çын юлмичен кроса хутшăнса нормисене параççĕ.

Кроса ирттересси пур вырăнсенче те [illegible]. Кувакино, Советски, [illegible], Пăрачкав тата Шăхасан районĕсенче, кирлĕ пек ертсе пыман пирки, кроса хутшăнакансем сахал. [illegible] районĕнче 14 кун хушшинче кроса мĕн пурĕ те 309 çын кăна хутшăннă. Хăшпĕр районсенче кроса комсомолецсем те сахал хутшăнаççĕ. Калинински, Шăмăршă районĕсенче [illegible]. Шăмăршă районĕнче 677 комсомолецран 146 комсомолец кăна кроса хутшăннă.

Ку ĕçтĕ ВЛКСМ райкомĕсен секретарĕсем [illegible].

[illegible]

лецсене тата çамрăксене йĕлтĕр çине тăратма кирли çине сӳрĕккĕн пăхнă. Çавăнпа хăйсен районĕсенчи çамрăксене кроса хутшăнтарайман.

Кроса организованно ирттерессипрофсоюзсен республикăри организацийĕсем активлăн хутшăнса ĕçленинчен те килет. Анчах профсоюз организацийĕсем йĕлтĕрçĕсен кросне ирттерес ĕçрен пăрăнса тăнине палăртмалла. Профсоюзсен обком председателĕсем кросс çинчен çырнă отношенисем çине алă пуснипе е резолюцисем хунипе лăпланса лараççĕ. Профсоюзсен вырăнти организацийĕсем профсоюзăн уйрăм членĕсем кроса мĕнле хутшăнни çинчен, тренировкăсем иртнипе иртменни çинчен сахал пĕлеççĕ.

Профсоюз членĕсемпе комсомолецсен кросĕ февралĕн 23-мĕшчен пырать. Кросăн юлашки эрнипе туллин усă курмалла. Кросра пулмалли çынсене тĕплĕн шута илсе тухмалла, кроса хутшăнмасăр пĕр çамрăк та, пĕр профсоюз членĕ те ан юлтăр.

Пĕр минутăна та сая ямалла мар. Комсомол тата профсоюз организацийĕсен юлашки эрнен кашни кунĕпе туллин усă курмалла, тренировкăсем ирттермелле. Кашни кун старт патне пиншер çĕнĕрен çĕнĕ комсомолецсемпе çамрăксем, профсоюз членĕсем пырса тăччăр.

Кашни комсомолец, çамрăк, профсоюз членĕ кроса хутшăнмалла. Хăшпĕр вырăнсенче, йĕлтĕрсем çук тесе, ăмăртăва хутшăнмасăр тăраççĕ. Йĕлтĕрсем çук [illegible]

[illegible]

Пирĕн республика кроса организованно ирттересĕ тĕлĕшпе Мари республикипе ăмăртать. [illegible] Хĕрлĕ Çар 24 çул тултарнă тĕле комсомолăн [illegible]

Элекçĕсене питлени

Эпир, Украина ученăйĕсем, Германи информаци бюровĕн [illegible]

[illegible]

пех, хăйсем куçарса илнĕ. Академи президиумĕ [illegible]

[illegible]

тиверсе çунтарассине хăйсен профессийĕ туса хунăскерсем, кĕнекесенчен тунă кăвайте юрататкансерсем, вĕсем хăйсен вандалла тискерлĕхĕсене çакăн пек ĕнтĕ урăххисем çине тӳнтерме тăрăшаççĕ. Украинăри Наукăсен Академин библиотекине эвакуациленĕ чухне пĕр кĕнеке те пĕтмении çинчен калама кирлĕ-ши ĕнтĕ?

Гитлеровецсене çĕнĕ кăвать тумашкăн кĕнекесем çитмеççĕ пулас, çавăнпа та вĕсем «Советсем хулана пăрахса тухса кайнă чухне Украинăн çавтери халăхĕ та паха альырăвĕсен пуххине илсе кайнă», тесе пĕлтереççĕ. Наукăпа культурăн чăн-чăн тусĕсем кун пирки, паллах ĕнтĕ, пĕтĕм чĕререн савăнма çеç пултараççĕ. Анчах та академин библиотекинче 6 миллион том кĕнеке пулнă. Эпир пурсăмăр та библиотекăн фашистла варварсен аллине тăрса юлнă пайĕпĕн питех те шикленетпĕр.

Нимĕçсем хăйсен элеклĕ пĕлтерĕвĕнче темĕнле «Украинăри Наукăсен Киеври академийĕ» çинчен çыраççĕ. Совет правительстви тăрăшнипе пула Украинăри Наукăсен Академине вăхăтрах эвакуацилесе Башкирие, Уфа хулине куçарнине мĕнпур наука тĕнчи пĕлет. Вăл кунта халĕ питĕ ăнăçлă ĕçлет. Наукăсен академин институчĕсене те, хăйсен мĕнпур оборудованийĕ-мĕнĕхăйсен производствинче Украинăри Наукăсен Академин институчĕсенчен пĕри туса хатĕрленĕ методсемпе усă кураççĕ. Пирĕн хими институчĕсем оборона промышленноçĕнчи производствăна физикăпа химие енчен контроль тумалли çĕнĕ методсем шухăшласа кăларнă, вĕсем металсен коррозине хирĕç кĕрешес тĕлĕшпе ăнăçлăн ĕçлеççĕ, пирĕн нефть промышленноçне пулăшас ĕçе активлăн хутшăнаççĕ. Çавнашкалах тата çак институтсем промышленность валли чĕртаварсем тупас тĕлĕшпе—питĕ дефицитлă япаласене урăх япаласемпе улăштарас тĕлĕшпе те ăнăçлăн ĕçлеççĕ. Академин пур отделенийĕсемпе институчĕсем те çавтери паха ĕçсем тунă, халĕ те çавăн пекех паха ĕçсем туса пыраççĕ. Пире ĕçлемешкĕн лайăх условисем туса панă, ССР Союзĕнче Украина наукипĕн халĕ те, ĕлĕкхи пекех, кунран кун тăрăшса пыраççĕ, ăна хисеплеççĕ, шанаççĕ.

Гитлерла Германие хăвăртрах та пĕтĕмпех аркатса тăкас ĕçе пур майсемпе те пулăшса пырассине Украинăри Наукăсен Академийĕ хăйĕн таса тивĕçĕ пулса тăрать тесе шутлать. Украинăри Наукăсен Академийĕ совет Киевне таврăнас вăхăт инçех мар юлни пирки эпир минутăлăха та иккĕленсе тăмастпăр.

Украина Советлă Социализмлă Республикин Наукăсен Академин Президенчĕ академик А. БОГОМОЛЕЦ.
Вице-президентсем: А. ПАЛЛАДИН, А. САНОГИН, Б. ЧЕРНЫШЕВ.
Академин действительнăй членĕсем: А. ДИННИК, П. БУДНИКОВ, Н. ГРИНЬКО, М. КАЛИНОВИЧ, А. ЛЕОНТОВИЧ, М. ЛУГОВЧЕВ, А. БРОДСКИЙ, В. СЕЛЬСКИЙ.

Совет Информаци Бюровĕнчен

Февралĕн 14-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерӳ

Февралĕн 14-мĕшĕнче пирĕн войскăсем, противник хирĕç тăнине сирсе пăрахса, малалла куçса пынă.

Февралĕн 13-мĕшĕнче сывлăшри çапăçусенче нимĕçсен 11 самолетне персе антарнă. Пирĕн 8 самолет пĕтнĕ.

* * *

Февралĕн 13-мĕшĕнче пирĕн авиацин чаçĕсем нимĕçсен 3 танкне, войскăсемпе грузсем турттарса пыракан 200 автомашинине, боеприпассем тиенĕ 150 лавне яхăн, 9 орудине, 4 тракторне, зенитнăй пулеметсен 3 точкине пĕтерсе тăкнă тата сиенленĕ, боеприпассен складне сирпĕнтерсе янă. Противник пехотин икĕ батальонне салаласа янă, вĕсенчен пĕр пайне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Авдеенко юлташ командир пулса ертсе пыракан пирĕн часть (Хĕвеланăç фрончĕ), противника хирĕç вăйлăн çапăçса, пĕр кун хушшинче тăшманăн салтакĕсемпе офицерĕсене 400 çынна пĕтерсе тăкнă. Тепĕр участокра Орлов юлташ командир пулса ертсе пыракан мотострелковăй чаçри артиллеристсем нимĕçсен 6 блиндажне çĕмĕрнĕ, çавăнта тăшманăн салтакĕсемпе офицерĕсене 100 çынна яхăн пĕтерсе тăкнă.

* * *

Калинин фрончĕн уйрăм участокĕсенче кĕрешекен пирĕн чаçсем пĕр кун хушшинче халăх пурăнакан 6 пункта ирĕке кăларнă, нимĕçсен 6 танкне, 5 орудине, минометсен 2 батарейине пĕтерсе тăкнă, 10 блиндажне çĕмĕрнĕ тата 3 оруди, 15 пулемет, снарядсемпе винтовка патронĕсем нумай тытса илнĕ. Противникăн салтакĕсемпе офицерĕсем 1.600 çын вилсе пĕтнĕ.

* * *

Сахаров юлташ ертсе пыракан йĕлтĕрçĕ-красноармеецсен группи А. ялĕнче çирĕпленсе ларнă противник çине çĕрле пырса тапăннă. Гитлеровецсем вырнаçнă çуртсем çине гранатăсем пăрахса, красноармеецсем нимĕçсене ялтан хăваласа кăларнă. Ялтан тухсан гитлеровецсене Сахаров юлташăн пĕлсе вырнаçтарса тухнă йĕлтĕрçĕ-автоматчикĕсем кĕтсе илнĕ. Ăнăçлăн ирттернĕ операцире нимĕçсен 100 салтакне вĕлернĕ. Тăшманăн обозне тата продовольстви складне тытса илнĕ.

* * *

Донбасс партизанĕсем нимĕçсен чаçĕ çине икĕ хутчен ăнăçлăн пырса тапăннă. Совет патриочĕсем С. юлташ ертсе пынипе Гитлер салтакĕсем вырнаçнă çĕре пырса кĕнĕ те тăшманăн блиндажĕсем çине гранатăсем ывăтнă. Партизансем нимĕç оккупанчĕсене 40 çынна ытла вĕлерсе пĕтерсе, 2 пулемет, пĕр автомат тытса илнĕ тата 3 çынна тыткăна илнĕ.

* * *

Нимĕçсен 258-мĕш пехотнăй дивизийĕнчи 458-мĕш полкĕнчен февралĕн 7-мĕшĕнче тыткăна парăннă ефрейтор Юзеф Бекер çапла каласа панă: «Пирĕн 258-мĕш дивизире малтан 12 пин салтакпа офицер пулнă. Юлашки вăхăтра дивизин питĕ пысăк çухатусем тӳсрĕ. Халĕ пĕтĕмпе те 600 салтакпа офицер кăна тăрса юлнă. Çак даннăйсене эпĕ тĕрĕссипех пĕлетĕп, мĕншĕн тесен эпĕ 7-мĕш ротăн поварĕ пулса ĕçленĕ, çавăнпа та личнăй составăн списокне лайăххах пĕлетĕп. Апат-çимĕç енĕпе ĕç питĕ те начар. Апат-çимĕçсене транспорт самолечĕсемпе турттараççĕ, анчах та вăл питĕ сахал. Юлашки вăхăтра 8 салтак пуçне те талăкне пĕр килограмм кăна çăкăр паратчĕç. Çарта дисциплина япăхсах пырать. Приказсене пурнăçламанни питĕ нумай. Тӳрленмен салтаксене штрафной ротăсене яраççĕ. Çав ротăсенче фельдфебельсемпе унтерофицерсем салтаксене питĕ тискеррĕн тыткалаççĕ. Штрафной ротăсене чи хăрушă ĕçсене: взрыв тăвакан япаласене тĕрĕслесе пăхнă çĕре, снарядсене сиенсĕрлетнĕ çĕре, минăсем хунă тата вĕсене тасатнă çĕре яраççĕ. Гестапо аллинчи штрафной ротăсенчен салтаксем пуринчен те ытларах хăраççĕ».

* * *

Уралти Турьински рудникри Медведенко юлташ ертсе пыракан забойщиксен бригади ĕç нормине кулленех виçĕ хут ирттерсе тултарса пырать.

1-мĕшĕнчен пуçласа 14-мĕшне çитиччен, нимĕç авиацийĕн 269 самолет пĕтнĕ. Вĕсенчен сывлăшри çапăçусенче 137 самолет персе антарнă, пирĕн зенитчиксем 34 самолет персе ӳкернĕ, противникăн аэродромĕсем çинче 98 самолет пĕтерсе тăкнă. Çав вăхăт хушшинче пирĕн 83 самолет пĕтнĕ.

* * *

Юлашки кунсенчи вăйлă çапăçусенче Наумов юлташ командир пулса ертсе пыракан часть (Хĕвеланăç фрончĕ) нимĕçсенне 6 оруди, 75 пулемет, 28 автомат, 22 мотоцикл, 122 винтовка, 513.500 винтовка патронĕ, икĕ радиостанци тата ытти трофейăсем нумай тытса илнĕ.

* * *

Хĕвеланăç фрончĕн участокĕсенчен пĕринче кĕрешекен пирĕн гвардейски чаçăн боецĕсем нимĕçсене К. ялĕнчен хăваласа кăларнă. Ку ял вăл противникăн вăйлă çирĕплетнĕ районĕнчи опорнăй пункт пулнă. Нимĕçсем, çак çапăçура хăйсен салтакĕсемпе офицерĕсене 270 çын çухатса, пĕр самолет, 212 винтовка, 5 пулемет, 31 лав, снарядсемпе минăсем тата патронсем нумай пăрахса хăварса, каялла чакнă.

* * *

Поздняк юлташ командир пулса ертсе пыракан пирĕн часть (Калинин фрончĕ) противникăн йĕлтĕрлĕ пысăк отрячĕ çине кĕтмен çĕртен пырса тапăннă. Пулса иртнĕ хаяр çапăçура нимĕçсен салтакĕсемпе офицерĕсем 200 çын вилсе пĕтнĕ. Пирĕннисем боеприпассемпе обмундировани тата медикаментсем тиенĕ 100 лав тытса илнĕ тата 33 нимĕçе тыткăна илнĕ. Çав кунах боецсем нимĕçсен Д. пункт патнелле каякан колоннине çапса аркатнă. Çапăçу хирĕнче тăшманăн 200 вилли выртса юлнă.

* * *

Кĕçĕн лейтенант Русеновский юлташ 4 боецпа пĕрле пулса нимĕçсен 22 салтакне тыткăна илнĕ.

* * *

Румынсен 1-мĕш дивизийĕнчи 85-мĕш пехотнăй полкăн 1-мĕш батальонĕн командирĕ майор Бонкеш Марку, Кăнтăр фронтĕнче тыткăна илнĕскер, çапла каласа панă: «Юлашки çапăçусенче румын войскисем питĕ пысăк çухатусем тӳсрĕç. Чылай офицерсен шухăшĕпе, нумай чаçсем çапăçма пултараймаççĕ. Пĕрремĕш дивизире вăрçма кăмăллакан ни пĕтĕмпе те пĕр çын кăна. Çакă вăл дивизи генералĕ Бурзотеску, тимĕр хĕрес илме ĕмĕтленекенскер. Румын салтакĕсем вăрçасшăн мар. Вĕсем киле таврăнасшăн. Манăн батальонран 75 салтак тарчĕç. Партизансем пире пĕрмаях тĕл тата питĕ сисĕнмелле пыра-пыра çапаççĕ. Одессăра партизансем нимĕçсемпе румын офицерĕсен пухăвĕ пынă çурта взрыв туса сирпĕнтернĕ. Çуртăн ишĕлчĕкĕ айĕнче 100 ытла офицер, вăл шутрах румынсен 10-мĕш пехотнăй дивизийĕн командирĕ тата генеральнăй штаб офицерĕ пĕтнĕ».

* * *

Пирĕн чаçсем пырса çапнипе Смоленск облаçĕнчи Козельск районĕнчи Побуж ялĕнчен чакса тухнă чухне гитлеровецсем старихсемпе хĕрарăмсене тата ачасене 120 çынна ял хĕррине хăваласа пухнă та вĕсене пулеметсенчен персе вĕлернĕ. Аманнисене штыксемпе чике-чике пăрахнă. Тискеррĕн асаплантарса вĕлернĕ совет граждансем хушшинче ачасем те нумай: Обуховсем — 7 çулти Ваня, 10 çулти Маня, пĕр çулти Таня, 3 çулти Ковычкин Ваня, Суховсем — 13 çулти Александра, 16 çулти Павел, 9 çулти Иван тата ыттисем те нумай. Гитлер бандичĕсем пĕтĕм яла вут тивертсе çунтарса янă. Ялти 170 çуртран 5 çурт кăна тăрса юлнă.

* * *

Отечественнăй аслă вăрçă кунĕсенче Ткварчелири (Грузия) Сталин ячĕпе тăракан шахтăра фронта кайнă арçынсем вырăнне ĕçлеме 200 ытла хĕрарăм тăнă. Шахтеркăсем: Меладзе, Грин, Чайкова, Баранова, Войкова юлташсем сменăра 2-шер норма тултарса ĕçлеççĕ.

Февралĕн 15-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерӳ

Февралĕн 15-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн войскăсем, нимĕçсен фашистла войскисене хирĕç çапăçса, наступлени туса пынă.

* * *

Парседов юлташ командир пулса ертсе пыракан пирĕн часть, çĕрлехи çапăçура противникăн хирĕç тăмалли вăйлă çирĕплетнĕ вырăнне çапса аркатнă та, танксене хирĕç пемелли 17 оруди боеприпассемпе пĕрлех, 50 лаша тата ытти трофейăсем тытса илнĕ. Противникăн салтакĕсемпе офицерĕсем 350 çын вилсе пĕтнĕ.

* * *

Ленинград фронтĕнчи уйрăм участоксенче кĕрешекен пирĕн чаçсем тунă боевой операцисенче юлашки икĕ кун хушшинче тăшманăнне 2 танк, 88 оруди, 17 пулемет, минометсен батарейине пĕтерсе тăкнă тата 27 пулемет, 26 автомат, радиостанци тытса илнĕ. Противникăн салтакĕсемпе офицерĕсем 1.800 çын вилсе юлнă. Тыткăна илнисем пур.

* * *

Зиновьев юлташ командир пулса ертсе пыракан пирĕн часть (Кăнтăр-Хĕвеланăç фрончĕ) нимĕçсене халăх пурăнакан 3 пунктран хăваласа кăларнă. Çапăçура нимĕçсен салтакĕсемпе офицерĕсене 700 çынна çити пĕтерсе тăкнă. Фронтăн тепĕр участокĕнче Поляков юлташ командир пулса ертсе пыракан чаçăн боецĕсем, противникăн контратакисене сирсе ярса, танксене хирĕç пемелли 3 оруди, 10 миномет, 26 пулемет, 13 автомат, 50 винтовка тата 20.000 патрон тытса илнĕ.

* * *

Хăюллă разведчиксем—Агапитов сержантпа Бердников красноармеец тăшманăн тылĕнче пынă чухне, нимĕçсен штабĕн автомашинине асăрханă. Совет разведчикĕсем гранатăсем ывăтса штабăн икĕ офицерне тата шофера вĕлернĕ, паха документсем тытса илнĕ.

* * *

Нимĕçсен СС «Мертвая голова» дивизийĕнчи 1-мĕш полкăн 1-мĕш ротинчен тыткăна парăннă салтак Альберт Шмиткер çапла каласа панă: «Пирĕн дивизи питĕ пысăк çухатусем тӳсрĕ. Вырăссен артиллерийĕ тĕлĕнмелле тĕл перет. Блиндажсем çине тата блиндажсене кĕрсе çӳремелли çĕре снарядсем тĕл лекнине эпĕ темĕн чухлех курнă. Чаçсенче дисциплина япăхса кайнă. Салтаксем час-часах офицерсене хирĕç тавлашаççĕ. Дисциплинăна пăснăшăн взысканисем париссипитĕ ӳссе кайрĕ, анчах та çакă вăл пулăшмасть. Часовойсем хăйсен ирĕкĕпех блиндажсене каяççĕ те çывăрма выртаççĕ. Вĕсем: «Вырăссем килччĕр те пире тыткăна илччĕр»,—теççĕ. Нумаях та пулмасть çар сучĕ 5 салтака приказсене пурнăçламаншăн вĕлермелле турĕ».

* * *

Çапăçу хирĕнче нимĕç салтакĕн дневникне тупнă, вăл салтакăн хушаматне палăртма май килмен. Дневникри хăшпĕр вырăнсене илсе пичетлетпĕр.

«**Юнкун.** Каçхине 11 сехетре каллех тревога пулчĕ. Вырăссем наступлени тăваççĕ. Высота çине тухатпăр. 156 пехотнăй полкри капитан та кунта. Вăл ухмаха ернĕ пулмалла. Пĕр отделени командирне аманнă салтака çыхма хушнă. Çакăнта капитан хутшăнчĕ. Вăл урса кайсах: «Эсир малалла каясшăн мар!»—тесе кăшкăрма тытăнчĕ. Вăл çав отделени командирĕ çине сиксе ӳкрĕ те ăна пистолетран 4 хутчен печĕ. Унтан капитан тепĕр икĕ салтака персе вĕлерчĕ.

Эрнекун. Паян почтăн виçĕ вагонĕ çунса кайни çинчен пĕлтерчĕç. Ку пирĕншĕн пысăк çухату.

Тунтикун. Каялла чакма приказ илтĕмĕр. Кун çинчен калама çăмăл, чакма вара инкек, мĕншĕн тесен вырăссем пирĕн пулеметсене пурне те пусарса лартрĕç тата вĕсем пирĕн çине çĕр чĕтренмеллех пеме тытăнчĕç. Эпĕ питĕ хытă тартăм, ун пек хамăн ĕмĕрте нихăçан та тарман».

* * *

Ленинград облаçĕнчи халĕ нимĕçсенчен ирĕке кăларнă Юрьево ялĕнче пурăнакансем гитлерла бандитсен тискер ĕçĕсем çинчен акт çырнă. Нимĕçсем хресченсенчен мĕнпур выльăх-чĕрлĕхсене, кайăк-кĕшĕксене, тырпула, пахчаçимĕçсене, килти япаласене пĕтĕмпех туртса илнĕ. Палачсем колхозниксенчен тискеррĕн мăшкăлланă, хĕрарăмсемпе ачасене халăх умне илсе тухса хĕненĕ. Ялтан чакнă чух нимĕç бандичĕсем колхозниксен 27 çуртне, общественнăй çуртсене, столовăйне, пекарньне, ача çуратмалли çурта, амбарсене пĕтĕмпех çунтарса янă.

Февралĕн 15-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерӳ

Февралĕн 15-мĕшĕнче пирĕн войскăсем, нимĕçсен фашистла войскисене хирĕç çапăçса, малалла наступлени туса пынă. Противник çапăçăва хăйĕн резервĕсене кĕртнĕ. Фронтăн хăшпĕр участокĕсенче нимĕçсен фашистла войскисем контратакăсем тунă, анчах та çав контратакăсене, нимĕçсене пысăк çухатусем кӳрсе, сире-сире пăрахнă.

Февралĕн 14-мĕшĕнче сывлăшри çапăçусенче нимĕçсен 7 самолетне персе антарнă. Пирĕн 5 самолет пĕтнĕ.

Февралĕн 15-мĕшĕнче Мускав патĕнче нимĕçсен 3 самолетне персе антарнă.

* * *

Февралĕн 14-мĕшĕнче пирĕн авиацин чаçĕсем тăшманăн войскăсемпе грузсем турттарса пыракан 125 автомашинине, штабăн 3 автобусне, боеприпассем тиенĕ 60 лавне яхăн, 11 орудине пĕтерсе тăкнă тата сиенленĕ, боеприпассен складне взрыв туса сирпĕнтернĕ, чугун çул çинчи 20 вагона çапса аркатнă, тăшманăн пехотин 3 батальонне салаласа янă, вĕсенчен пĕр пайне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Иртнĕ икĕ эрне хушшинче, февралĕн

Февралĕн 16-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерӳ

Февралĕн 16-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн войскăсем нимĕçсен фашистла войскисене хирĕç активлăн çапăçнă.

* * *

Павлищев юлташ командир пулса ертсе пыракан пирĕн часть (Хĕвеланăç фрончĕ) халăх пурăнакан темиçе пункта нимĕç оккупанчĕсенчен ирĕке кăларнă тата нимĕçсенне 16 оруди, 15 пулемет, 3 миномет, 303 винтовка, 35 автомашина, 35 мотоцикл тата ытти трофейăсем те тытса илнĕ. Противникăн салтакĕсемпе офицерĕсене 1000 çынна ытла вĕлернĕ.

* * *

А. П. Белобородов командир пулса ертсе пыракан гвардейски часть, Хĕвеланăç фрончĕн участокĕсенчен пĕринче кĕрешекенскер, тăшман пехотин батальонĕ виçĕ хутчен питĕ хаяррăн контратака тунине сирсе ярса, нимĕçсен 2 танкне пĕтерсе тăкнă. Çапăçу хирĕнче противникăн салтакĕсемпе офицерĕсен виллисем нумай выртса юлнă.

* * *

Гордов юлташ командир пулса ертсе пыракан пирĕн часть (Кăнтăр-Хĕвеланăç фрончĕ) гитлеровецсене халăх пурăнакан темиçе пунктран çапса кăларнă. Нимĕçсен темиçе хутчен тунă контратакисене сире-сире пăрахнă, фашистсене пысăк çухатусем кӳнĕ. Пирĕн боецсем тăшманăн 6 ДЗОТ-не, 21 блиндажне, артиллери батарейине минометсен батарейине, 6 пулеметне, 20 автомашинине, горючи склачĕпе боеприпассен складне пĕтерсе тăкнă. Тыткăна илнисем те пур.

* * *

Голованов лейтенант командир пулса ертсе пыракан 11 красноармеец тăшман роттин контратакине ăнăçлăн сирсе пăрахнă. Голованов юлташ 7 гитлеровеца персе вĕлернĕ. Нимĕçсем юр çине 28 вилле пăрахса хăварса чакнă.

* * *

И. юлташ командир пулса ертсе пыракан партизансен отрячĕ, Украинăн районĕсенчен пĕринче кĕрешекенскер, нимĕçсем оккупациленĕ К. ялĕ çине пырса тапăннă. Çавăн пек тапăнассине кĕтмен гитлеровецсем партизансен вут çулăмĕ айне лекнĕ те пысăк çухатусем тунă. Нимĕçсен фашистла захватчикĕсене сахалтан та 40 çынна вĕлернĕ.

* * *

Нимĕçсен 3-мĕш мотодивизийĕнчен тыткăна лекнĕ салтак Курт Хайзе çапла каласа панă: «Икĕ кун хушшинче кăна пирĕн ротăри салтаксемпе офицерсене 35 çынна вĕлернĕ. Вĕлернисем хушшинче Курт Ханцель лейтенант та пур. Чакнă чухне юсавлă машинăсенех нумай пăрахса хăварма тиврĕ. Вĕсем кĕрт ăшне кĕрсе ларатчĕç те вара, вăхăт çук пирки, çавăнтах юлатчĕç. Вăрçă çавтери йăлăхтарса çитерчĕ. Салтаксенчен нумайăшĕсем вырăссен енне каçмашкăн лайăхрах вăхăта çеç кĕтсе пурăнаççĕ».

* * *

Мускав облаçĕнчи Уварово районĕнчи Яма ялĕнчен чакса тухса кайнă чухне гитлеровецсем хĕçпăшалпа хăратсах хăйсемпе пĕрле ял çыннисене хăваласа тухса кайнă, хушнине итлеменнисене персе пăрахнă. Монахова колхозница хăйĕн кăкăр ĕмекен ачипе тата виçĕ çулти ачипе пĕрле землянкăра пытанса юлма шутланă. Нимĕçсем ăна пырса тупнă та тăнран яриччен хĕненĕ, унтан землянкăна граната пăрахнă. Монаховăна ачисемпе пĕрлех тăпра хупласа лартнă.

* * *

Томск чугунçулĕ çинчи Топки деповĕнчи машинистсем Громышев, Евлахов, Шаров, Атаманов, Лыходец тата Ходаков юлташсем, шартлама сивĕ çанталăка пăхмасăрах, кăçал кăрлач тиенĕ 40 поезда илсе кайнă. Вĕсем 200 тонна ытла топливо перекетленĕ тата паровозсем юсас тĕлĕшпе 10 пин тенке яхăн экономи тунă.

Совет Союзĕ тăрăх

** Омск чугунçулĕ çинчи Н-ски станцири железнодорожниксем Хĕрлĕ Çар 24 çул тултарнă ятпа бронепоезд туса пĕтернĕ. Стахановецсем питĕ тăрăшса ĕçленĕ. Гаврилов юлташ, пулеметсем валли пăс установки тунă чухне рационализаторла сĕнӳ парса, пăс кăларассине 7 хут хăвăртлатма май панă. Артиллери орудийĕсене вырнаçтарса çитерне. Бронепоезд фронта тухса каять.

** Иваново хулине Калинин хулинчи ĕççыннисен делегацийĕ пынă. Иваново облаçĕнчи хуласемпе ялсенче Калинин облаçĕн нимĕçсен фашистла захватчикĕсенчен ирĕке кăларнă районĕсенчи халăха пулăшу пама кĕпе-тумтир тата килте тытмалли ытти япаласем те пухаççĕ.

** Красноярск чугунçулĕ çинче фашистла оккупантсенчен ирĕке кăларнă районсенчи железнодорожниксене производство енĕпе пулăшу парассине организациленĕ. Депора, вагонсем юсакан пунктсенче, дистанцисенче тĕрлĕ инструментсемпе оборудовани ярса пама хатĕрлеççĕ. Сыхăнăвăн пиллĕкмĕш дистанцин коллективĕ диспетчер сыхăнăвĕнчи аппаратурăн пĕррремĕш ушкăнне ярса та панă. Аппаратурăн иккĕмĕш ушкăнне ярса пама хатĕрленеççĕ.

** Хакассире тăвакан сахăр завочĕ кăçал 70 пин центнер сахăр туса кăларать. Красноярск крайĕн кăнтăрти районĕсенчи колхозсенче 5.000 гектар сахăр кăшманĕ акаççĕ.

** Вологда облаçĕнчи колхозсенче махоркăпа сахăр кăшманне кăçал пуçласа питĕ нумай лартма хатĕрленеççĕ. Çак культурăсене 10.000 гектар акса хăвараççĕ.

(ТАСС, февралĕн 12-мĕш.)

Отечественнăй аслă вăрçă фрончĕсене

Тăшманăн аэродромне аркатни

КАРЕЛИ ФРОНЧĔ, февралĕн 14-мĕш. (ТАСС спецкорр). Разведчиксем тăшман аэродромĕ хăш вырăнтине пĕлсе илчĕç. Çĕрле Сухманов, Борохвостов летчиксем [illegible] хăйсен хăватлă машинисемпе çав аэродрома тапăнма вĕçсе кайрĕç.

Штурмансем самолетсене пăп тĕл çине илсе тухрĕç. [illegible] пикке тума тытăнчĕç. Вăйлă взрывсем кĕрлесе кайрĕç. Хĕп-хĕрлĕ пушар çути йĕри-тавра çутатса кайрĕ. Çап-çутă çулăмсем аэродром çинчи çуртсене, самолетсене, бензин тултарнă пичкесене ярса илчĕç. [illegible]

Бомбардировщиксем, пĕрин хыççăн тепри тĕл çине çитсе, вилĕм груссене тăкнă.

Нимĕçсем арăш сывлăш çавăрса илме те зениткăсемпе пеме тытăннă. Анчах те халь [illegible] снарядсем самолетсенчен таçтах аякра çурăлаççĕ, вĕсене нимĕнле сиен те тăваймаççĕ. Вара тин нимĕçсем 6 истребительпе совет бомбардировщикĕсене тапăнма вĕçсе хăпарчĕç. Вĕсем пирĕн машинисене атакăлама хăтланса пăхрĕç, анчах та хĕрлĕ çăлтăрлă бомбардировщиксем хăйсен заданине пурнăçа кĕртнĕ хыççăн çĕрлехи [illegible] тĕттĕмлĕхне кĕрсе çухалма ĕлкĕрнĕ. Вĕсем пурте хăйсен базине тĕрĕс-тĕкел таврăнчĕç.

Ир пулсан, летчик-разведчиксем хăйсен боевой юлташĕсем çĕрлехи ĕçне пăхса тĕрĕслесе килчĕç. Тăшманăн аэродромĕ çинче [illegible], 4 «Мессершмитт» самолечĕ [illegible] «Юнкерс-52» самолет ларнă тата 5 барак — нимĕç салтакĕсен казармисем [illegible].

Черкасов коновод нимĕçсен танкне пĕтерсе тăкнă

ДЕЙСТВУЮЩИ АРМИ, февралĕн 15-мĕш. (ТАСС). Е. ялĕшĕн çапăçу вăхăтĕнче Черкасов коновод сывăхри вăрманта лашасем патĕнче тăнă. Черкасов нимĕçсен танкне [illegible] çапăçура кĕрешекен красноармеецсен çине вут тăкма тытăннă. Черкасов юлташ темиçе гранатăна пĕрле çыхать те васкасах [illegible] танк [illegible] çапăçура [illegible] тухать.

Софронов комсомолецăн паттăр ĕçĕ

КАНТАР-ХЕВЕЛАНАÇ ФРОНЧĔ, февралĕн 15-мĕш. (ТАСС спецкорр). Н-ски часть наступление кайма приказ илнĕ. Çапăçăва ыттисемпе пĕрле комсомолец Софронов та кайнă. Хĕрсе çапăçу пынă вăхăтра [illegible] командир [illegible]. Софронов нимĕç патне [illegible] пĕрсе те ярать. Герой Софронов [illegible] паттăр ĕç турĕ.

Гитлерла ирсĕрсен юнлă ĕçĕсем

ХЕВЕЛАНАÇ ФРОНЧĔ, февралĕн 14-мĕш. (ТАСС спецкорр). Нимĕçсен фашистла захватчикĕсем, вĕсене Хĕрлĕ Çар пыра-пыра çапнине [illegible] 66 çулти колхозницăна Ольга Николаевна Гусенковăна тискеррĕн асаплантарса пĕтернĕ. [illegible]

[illegible] Ломаково ялĕнче нимĕçсем аманнă красноармеецсене 70 çынна тата 12 колхозника [illegible]

Пятаково ялĕнче нимĕç салтакĕсем 78 çулти колхозницăна Анна Абрамовна Кизевăна [illegible]

А. ВИКТОРОВ.

Комсомолецсемпе çамрăксен тăваттăмĕш воскресникĕ

Комсомолецсемпе çамрăксен февралĕн 15-мĕшĕнче пулнă 4-мĕш воскресникне [illegible] совет çамрăкĕсем, пирĕн республикăри ĕççыннисем Ленинпа-Сталин партийĕ [illegible] ВКП(б) Центральнăй Комитечĕ, аслă Сталин тавра таччăн пĕтĕçсе тăнине тепĕр хут кăтартса парчĕç.

Малтанлăха шутласа пĕлнĕ туллимар даннăйсем тăрăх, 4-мĕш воскресникре республикипе 120 пин çын пулнă.

* * *

Воскресник Канаш районĕнче организованно иртнĕ. Унта 11.500 çын ĕçлеме тухнă. Вĕсем 31 пин тенкĕ укçа, 1500 ĕçкунĕ ĕçлесе илнĕ.

Вагонсем юсакан заводра ĕçлекенсем пĕтĕм коллективĕпех ĕçе тухнă. Уйрăммăнах çамрăксем паха тĕслĕхсем кăтартса ĕçленĕ. 13-мĕш номерлĕ цехри токарь Рылина комсомолка воскресникре нормăна 250 процент тултарнă. Волковăпа Денисова токарьсем те вăл кун 2-шер норма тултарса ĕçленĕ. Нумай пулмасть комсомола кĕнĕ Елохин стахановец задание 3 хут ирттерсе тултарнă.

Комсомолецсемпе çамрăксен бригади, ВЛКСМ комитечĕн секретарь-заместителĕ Андреев юлташ ертсе пынипе, чугунçул çинчи юра тасатнă çĕрте ĕçленĕ. Вĕсем нормăна 301 процент тултарнă.

Канаш станцинчи депо коллективĕ те воскресникре паха тĕслĕхсем кăтартрĕ. Уйрăммăнах Чеботарев юлташ ертсе пыракан фронтовой бригадăн ĕçне палăртмалла. Ку бригада васкавлă заказа пурнăçлас тĕлĕшпе ĕçленĕ. Заказа вĕсен 16 сехет хушшинче туса пĕтермелле пулнă. Çамрăксем ăна 13 сехет хушшинчех пурнăçланă. Чеботарев юлташ хăй тата бригадăн членĕ токарь Гунчак юлташ икшер норма çурă тултарнă. ФЗО шкулĕнчен практикăна пынă ачасем те тăрăшса ĕçленĕ. Фролухин, Казаков, Саховская, Волкова, Антонова юлташсем 2-шер норма тултарма ĕлкĕрнĕ. Электросварщик С. Жигунов вăл кун 3,5 норма тултарнă.

Хулари шкулсенче вĕренекенсемпе учительсем 500 çын ытла чугунçул [illegible] çине ĕçленĕ. Вĕсем 1.550 кубометр юра хуса тасатнă.

Колхозсенчи ĕççыннисем [illegible] хатĕрлеме тĕлĕшпе ĕçленĕ. Шкулсенче [illegible] нумайăшĕ хăйсем [illegible] валли вутă турттарса, татса хунă.

* * *

Вăрмар районĕнче воскресникре 6.637 çын пулнă, вĕсенчен 632 çын комсомолец. Вĕсем пурĕ 4.309 ĕçкунĕ тата 2852 тенкĕ ĕçлесе илнĕ. 43 çын чугунçул çинчи юра хырнă çĕрте, 82 çын васкавлă задание пурнăçланă çĕрте ĕçленĕ. Пысăк Енкассинчи, Шăхальри, Вăрмарти вăтам тата Энĕшпуçĕнчи туллимар вăтам шкулсенче вĕренекенсемпе учительсем вăл кун 53 кубометр вутă турттарса хатĕрленĕ.

* * *

Красноармейски районра Войков ячĕпе тăракан колхозри çамрăксем воскресник кунĕнче 9 центнер кĕл, 20 пăт кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ пухнă, 20 центнер вăрлăх сортланă.

Янмурзинăри колхозра воскресникре 97 çын пулнă. Вĕсем аван çапнă. Ку ĕçе ВЛКСМ пуçламăш организацин секретарĕ Р. Васильева юлташ аван йĕркеленĕ.

Упири вăтам шкулта вĕренекенсем 150 çын воскресникре 137,6 ĕçкунĕ ĕçлесе илнĕ.

* * *

ÇĔМĔРЛЕ. (Хамăр корр.). Комсомолецсемпе çамрăксен Хĕрлĕ Çар 24 çул тултарнă уява хатĕрленнĕ май пулса иртнĕ воскресникĕнче районри ĕççыннисем пысăк çĕкленӳпе ĕçлерĕç. Воскресникре пурĕ 4.122 çын пулчĕ. Вĕсем 12.914 тенкĕ ĕçлесе илчĕç тата 443 ĕçкунĕ турĕç.

«Труженик» заводран воскресникре 123 çын ĕçлерĕç. Вĕсем 1986 тенкĕ ĕçлесе илчĕç. Древкомбинат воскресникне пĕтĕм коллективĕпех хутшăнчĕ. Чылай рабочисем вăл кун ĕç нормине ытлашшипех тултарчĕç. Сăмахран, хăма çуракан цехри Ф. Степанова бригади талăкри ĕç нормине 147 процент пурнăçларĕ.

Куçса килнĕ ачасене пулăшма

СĔНТĔРВĂРРИ. Фронт çывăхĕнчи районсенчен куçса килнĕ ачасене пулăшас тĕлĕшпе Сĕнтĕрвăрри вăтам шкулĕнче вĕренекенсемпе учительсем 850 тенкĕ укçа пухрĕç. Вăл укçапа ачасене ăшă тумтирсем, вĕренме кирлĕ япаласем илсе параççĕ.

А. РАЗИН.

Гитлеровецсем аманнă нимĕçсене вĕлереççĕ

Германи çарĕнче санитари службин арканса кайни çинчен тата гитлеровецсем хăйсен аманнă салтакĕсене вĕлерни çинчен Швейцари врачĕсем пĕлтерни

СТАМБУЛ, февралĕн 14-мĕш. (ТАСС). Кунта паллă пулнă тăрăх, Швейцарири Хĕрлĕ Хĕресĕн врачĕсемпе медицина сестрисен 50 çынран тăракан пĕрремĕш делегацийĕ, кĕркунне Совет Союзĕпе Германи хушшинчи вăрçă фронтне кайнăскер, январь уйăхĕнче Швейцари правительствине телеграмма янă. Çав телеграммăра вĕсем хăйсене васкасах фронтран чĕнсе илме ыйтнă. Вĕсем ыйтнине Швейцари правительстви кăмăлланă, халĕ çав делегаци Берна таврăннă. Ютçĕршывсенче илнĕ шанчăклă сведенисем тăрăх, делегаци хăйĕн ĕçĕсем çинчен Швейцари правительствине 906 страницăллă доклад çырса панă. Çав докладра аманнисем питĕ нумай пырса тăнине пула Германи çарĕнчи санитари службин арканса кайнине кăтартса панă. Швейцари врачĕсем фронтри госпитальсенче те, çавнашкалах тата Германипе Польшăри госпитальсенче те ĕçленĕ. Монте хулинчи доктор Рошер çапла çырать: «Пĕр декабрь уйăхĕнче çеç манăн тăм илсе янă 300 çыннăн алли-урисене татма тиврĕ. Сивĕ çанталăк юн ярса пулăшу парас ĕçе чарса лартрĕ, çакăн пирки те ĕнтĕ аманнисем хушшинче вилесси татах 20 процент ӳсрĕ». Доктор Эдвард Гримм хăйĕн докладĕнче çапла çырать: «Тăм илнипе сусăрланнисем çавтери нумай пулнă пирки, вĕсем валли хăйне уйрăм госпитальсем уçма тивнĕ».

Профессор Андре Бальцер хăйĕн докладĕнче гитлеровецсем йывăр аманнă нимĕç салтакĕсене варварла тискерлĕхпе вĕлерни çинчен çапла каласа парать: «Германин Брест-Литовскри çар госпиталĕсенчен пĕринче ĕçлекен пĕр служащи мана çапла пĕлтерчĕ: йывăр аманнă салтаксене турттарса пыракан поездпа эпĕ юлашки хут кайнă чухне поезд пĕр тоннель умне çитсе чарăнчĕ. Поезд начальникĕ, свастика çыпăçтарса янăскер, поездра ĕçлекен мĕнпур персонала пухрĕ те пурне те газовăй маскăсем тăхăнма хушса, вĕсене ирĕк памасăр та ан хывăр, терĕ. Санитарсенчен пĕри аманнисемпе мĕн тумалла-ха тесе ыйтсан, поезд начальникĕ ăна: вĕсене куппесенчех хăварăр, хăвăр вагон коридорне тухăр, тесе таврчĕ. Çакăн хыççăн вара поезд тоннеле кĕрсе кайрĕ, кунта вăл татах темĕн чухлĕ вăхăт чарăнса тăчĕ. Поезд тоннельрен тухнă çĕре аманнисем пурте вилнĕ. Вĕсен виллисене унтан пĕр фермăна илсе пычĕç. Кунта вĕсене фермăра ĕçлекенсем пек тумланнă çынсем пытарчĕç. Брест-Литовскри çар госпиталĕнче ĕçлекен служащи мана çапла пĕлтерчĕ: çак çулра пулнă хыççăн эпĕ нимĕçсен аманнă салтакĕсене час-часах çапла вĕлернине, çак ĕçсене тумашкăн уйрăм поездсем пуррине пĕлтĕм, терĕ».

Çакăнта курнисем ĕнтĕ Швейцари врачĕсене хăйсен правительстви умĕнче хăйсене Германи санитари службинчен хăвартрах чĕнсе илесси çинчен ыйту лартма хĕтĕртнĕ.

Гитлеровецсем французсен 45 заложникне вĕлерме хатĕрленеççĕ

НЬЮ-ЙОРК, февралĕн 15-мĕш. (ТАСС). Юнайтед пресс агентстви илнĕ хыпарсем тăрăх, Германин Францири оккупациллĕ влаçĕсем çапла пĕлтернĕ: Руан тата Тур хулисенче нимĕç салтакĕсем çине тапăннă çынсене паян çурçĕрччен тупса кăтартса памасан, çав хуласенче 45 француз-заложнике асаплантарса вĕлереççĕ, тенĕ.

Гитлеровецсем Франци Тунисне хăйсен аллине тытса илни

НЬЮ-ЙОРК, февралĕн 15-мĕш. (ТАСС). Ассошиэйтед пресс агентствин Каирти корреспонденчĕ пĕлтернĕ тăрăх, Виши правительстви тĕнĕл держависене хăйĕн Тунисри порчĕсемпе усă курмашкăн ирĕк пама килĕшнĕ. Вара çак портсем урлă Италипе Германин Ливири войскисем валли снабжени кайса тămалла пулать.

Бельги халăхĕ выçăпа аптăрать

НЬЮ-ЙОРК, февралĕн 13-мĕш. (ТАСС). «Нью-Йорк таймс» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, Бельгин Лондонри Хĕрлĕ хĕрес обществин вице-председателĕ профессор Бигвуд çапла каланă: выçă аптăранă пирки Бельгире тĕрлĕ чир-чĕрсем питĕ хăвăрт сарăлса пыраççĕ. Халăх хушшинче цынга, рахит, анеми тата уйрăммăнах туберкулез питĕ сарăлнă. Германи оккупациленĕ хыççăн пĕрремĕш çул хушшинче туберкулезпа чирленисен хисепĕ икĕ хут, юлашки çурçул хушшинче — виçĕ хут ӳснĕ. Вăрçăччен хипе танлаштарсан, ытларах вилеççĕ. Нумай районсенче ача-пăчасем хăйсене йĕркеллĕ ӳсме кирлĕ çу хисепĕнчен 20 процентне çеç илеççĕ. Ачасем çиекен апат лайăхланмасан, ачасем питĕ нумай вилĕç теççĕ врачсем.

Нимĕçсем Польша халăхĕн ачисене продовольствисĕр хăвараççĕ

НЬЮ-ЙОРК, февралĕн 14-мĕш. (ТАСС). Германи пичетĕнче тухнă сведенисене кăтартса парса, Оверсис ньюс агентстви çапла пĕлтерет: гитлеровецсем поляксен ачисене, вĕсем ĕçре тămаççĕ пулсан тата ĕç биржинче çырăнман пулсан, малашне продовольстви карточкисем памалла мар тесе распоряжени каларнă. Ку таранччен ĕç биржинче çавăн пек йĕркепе çырăнма 16 çул тултарнă çамрăксенчен кăна ыйтатчĕç.

Гитлеровецсем Норвегире рабочисем „пухни"

НЬЮ-ЙОРК, февралĕн 13-мĕш. (ТАСС). Оверсис ньюс агентствин Стокгольмри корреспонденчĕ, Норвегирен илнĕ информаци тăрăх, гитлеровецсем Норвегире çĕнĕ майсемпе рабочисем «пухни» çинчен пĕлтерет. Вăл çапла çырать: Германи влаçĕсем рабочисене ушкăнĕ-ушкăнĕпе арестлеççĕ те вĕсене пурне те «Эсир Норвегирен тарма шутлатăр» тесе айăплаççĕ. Вара вĕсене асаплантарса вĕлермелле тесе приговор йышăнаççĕ. Кайран çав приговора «çемçетсе» пур айăпланă рабочисене те Германие ĕмĕрлĕхех каторгăна ямалли приговорпа улăштараççĕ.

Англи авиацийĕ Кельн, Аахен тата Гавр хулисем çине тапăнни

ЛОНДОН, февралĕн 14-мĕш. (ТАСС). Официальнăй йĕркепе пĕлтернĕ тăрăх, февралĕн 14-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле Англи авиацийĕ Хĕвеланăç Германи çине вĕçсе пырса тапăннă. Пуринчен ытла Кельнпа Аахен çине питĕ нумай бомбăсем пăрахнă. Çавăн пекех тата Гавр докĕсем çине, Францин оккупациленĕ зонинче вырнаçнă аэродромсенчен пĕрин çине вĕçсе пырса тапăннă. Çак операцисенче пулнă самолетсем пурте хăйсен базисене таврăннă.

Англин тата тĕнĕл держависен сывлăшри çухатăвĕсем çинчен Синклер тунă заявлени

ЛОНДОН, февралĕн 12-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Англин авиаци министрĕ Синклер, палатăсен общининче панă ыйту çине ответлесе, 1939 çулти сентябрь уйăхĕнчен пуçласа 1941 çулăн вĕçĕ тĕлне Англи, Германи тата Итали авиацийĕ тунă çухатусем çинчен тĕрĕсленĕ даннăйсем кăтартса панă. Синклер каланă тăрăх, 1939 çулти сентябрь—декабрь уйăхĕсем хушшинче Германи авиацийĕн 63 самолет, Англи авиацийĕн 32 самолет пĕтнĕ. 1940 çул хушшинче Германин 4.099 самолет, Италин—442 самолет, Англин—1.757 самолет пĕтнĕ. 1942 çул хушшинче Германин 2.278 самолет, Италин—1.677 самолет, Англин—2.192 самолет пĕтнĕ.

Англин мĕнпурĕ 3.981 самолет, Англи противникĕсен—8.559 самолет, вăл шутран Германин 6.440 самолет, Италин 2.119 самолет пĕтнĕ.

Противник тунă çухатусен хисепне ирĕклĕ Францин авиацийĕ пĕтерсе тăкнă самолетсем те кĕреççĕ, анчах тинĕс авиацийĕ, çар карапĕсемпе суту-илӳ суднисен зенитнăй орудийĕсенчен персе ӳкернĕ самолетсем кĕмеççĕ. Ирĕклĕ Франци авиацийĕн çухатăвĕсем Англи çухатăвĕсен хисепне кĕмеççĕ.

Германири магазинсем эрнере виçĕ кун хупă

«Франкфуртер цейтунг» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, Германири пур магазинсем те, аптекăсемсĕр пуçне, эрнере вырсарникун, тунтикун тата эрнекун ĕçлемеççĕ. Ытти кунсенче магазинсене ирхине 10 сехетре уçаççĕ. (ТАСС).

Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен „Граждански оборона управленийĕн" çĕнĕ руководителĕ

НЬЮ-ЙОРК, февралĕн 12-мĕш. (ТАСС). Юнайтед пресс агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Нью-Йорк хулин мэрĕ Ла Гардиа «Граждански оборона» директорĕн вырăнĕнчен отставкăна тухнă. Отставкăна тухас умĕн Ла Гардиа организаци тĕлĕшĕпе пур ĕçсене те туса çитерни çинчен Рузвельта каласа панă. Управлени руководительне Рузвельт Гарвард университетĕнчи право институчĕн ректорĕ пулнă Ландиса лартнă.

Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсенче икĕ эсминецпа пĕр крейсера туса пĕтернĕ

НЬЮ-ЙОРК, февралĕн 13-мĕш. (ТАСС). Ассошиэйтед пресс агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Америкăри верфьсенче паян икĕ эсминецпа пĕр крейсера туса пĕтерсе ĕçе янă. Çав çар карапĕсене палăртнинчен икĕ уйăх маларах туса çитернĕ.

Америкăн тинĕс-çар вăйĕсем Çĕнĕ Зеландие çитнĕ

ЛОНДОН, февралĕн 11-мĕш. (ТАСС). Англин информаци министерстви пĕлтернĕ тăрăх, Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен тинĕс-çар вăйĕсен малти отрячĕ Веллингтона (Çĕнĕ Зеландия) çитнĕ. Çула май çак отряд Гавай утравĕсенчен 4.000 миля аяккарах тăракан пунктсене пулăшу антарса хăварнă.

Çĕнĕ Зеландипе Австрали вăйĕсем Америка адмиралĕ Лири ертсе пыракан Австралипе Çĕнĕ Зеланди тинĕс-çар округне кĕреççĕ.

Америка эсминецĕ противникăн икĕ подводнăй лодкине путарнă

НЬЮ-ЙОРК, февралĕн 13-мĕш. (ТАСС). Юнайтед пресс агентствин корреспонденчĕ Сан-Францискоран илнĕ хыпар тăрăх, выранти тинĕс командованийĕ Америка эсминецĕ Лăпкă океанра тăшманăн икĕ подводнăй лодкине путарни çинчен пĕлтернĕ.

Черчилль Сингапур парăнни çинчен пĕлтернĕ

ЛОНДОН, февралĕн 15-мĕш. (ТАСС). Премьер-министр Черчилль хăйĕн радио тăрăх тухса каланă сăмахĕнче Сингапур парăнни çинчен пĕлтернĕ.

Индие Англин çар кабинетĕнче вырăн пани

ЛОНДОН, февралĕн 14-мĕш. (ТАСС). Англин информаци министерстви пĕлтернĕ тăрăх, Англи правительстви хăйĕн çак шухăш-кăмăлне палăртнă: Англин çар кабинетĕнче тата Лăпкă океан тĕлĕшпе ĕçлекен çар советĕнче представительсем тытас тĕлĕшпе доминионсем мĕнле правăпа усă кураççĕ, çав правăсене Индие те памалла пулать.

Бирмăна Китайăн çĕнĕ чаçĕсем çитнĕ

НЬЮ-ЙОРК, февралĕн 15-мĕш. (ТАСС). Ассошиэйтед пресс агентствин Китайпа Бирма чиккинчи корреспонденчĕ çапла пĕлтерет: Бирмăна Китай войскисен çĕнĕ чаçĕсем пырса çитнĕ, хăшпĕр чаçсем халĕ çул çинче, вĕсем те часах çитмелле. Пур чаçсем те лайăх хĕçпăшалланнă.

Чан Кай-ши Пешавара çитнĕ

ЛОНДОН, февралĕн 15-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентстви Пешавартан çапла пĕлтерет: паян Чан Кай-ши Пешаварти аэродрома çитнĕ. Ăна губернаторпа гарнизон начальникĕ йышăннă. Каç умĕн Чан Кай-ши Хайбер провинцине пырса кайнă.

Германи оккупациленĕ çĕршывсенчи Гитлера хирĕç ĕçлекен вăрттăн хаçатсем

НЬЮ-ЙОРК, февралĕн 15-мĕш. (ТАСС). Транспортра ĕçлекен рабочисен Федерацийĕн пĕтĕм тĕнчери информаци бюллетенĕ çапла пĕлтерет: Германире тата вăл оккупациленĕ çĕршывсенче халхи вăхăтра 300 ытла вăрттăн хаçат тухса тăрать. Францин оккупациленĕ зонинче çавăн пек 15 хаçат тухса тăрать. Францин оккупациленĕ зонинче ĕлĕк вăрттăн тухса тăнă «Либерасион» хаçата стеклографпа пичетленĕ пулнă, халĕ вăл журнал формачĕпе, ӳкерчĕксемпе пичетленсе тухать.

Чехословакире вăрттăн тухакан «Вбож» хаçат икĕ çул хушши ĕнтĕ кашни эрнерех пĕрер номер тухса тăрать. Норвегире сахалтан та 20 тĕслĕ вăрттăн хаçат тухса тăрать. Бельгире 40 тĕслĕ вăрттăн изданисем тухаççĕ, вĕсен тиражĕ 100 пин экземпляра çитет. Çав изданисенчен паллăраххи «Либр бельжик» пулать. Польшăра 150 тĕслĕ хаçат вăрттăн тухать.

Швейцари хаçачĕ «Базлер националь цейтунг» пĕлтернĕ тăрăх, вăрттăн тухса тăракан хаçатсен тиражĕ ӳснĕçемĕн ӳсе пырать.

Çуракине большевикла хатĕрленер

Михайлов агрономăн участокĕ малта

СОВЕТСКОЕ. Малта пыракан колхозсем кăçалхи çуракине иртнĕ çултах хатĕрленме тытăнчĕç. Çавăн пек колхозсенче халь, Кольцовка колхозникĕсен чĕнĕвне сӳтсе-явнă май, колхозниксем çуракине хатĕрленес тĕлĕшпе тума ĕлкĕреймен ĕçсене кĕске вăхăтра туса çитерессишĕн тăрăшаççĕ. Малтанрах çуракине çителĕксĕр хатĕрленнĕ колхозсем те васкасах ĕçлеме тытăнчĕç. Сăмахран, Моляковăри «За коммунизм», Тури Ачакри «Крестьянская газета» тата Анат Ачакри, Улăх-Шăматри колхозсенче кăçал акма кирлĕ вăрлăхсене пурне те тасатса çитерчĕç, плугсемпе сӳресене, сеялкăсене юсарĕç, ут таврашсем те пурте хатĕр.

Колхозниксемпе колхозницăсем ака вăхăтĕнче кам, ăçта тата мĕнле ĕç тумаллине пĕлсе тăраççĕ. Акара ĕçлемелли лашасене уйрăм конюхсем патне çирĕплетнĕ, вĕсене вăхăтра çитерсе, вăхăтра шăвараççĕ. Примерлă ĕçлекен конюхсенчен Улăх-Шăмат колхозĕнчи Кузьмин конюха палăртмалла. Конюхра вăл виçĕ çул хушши ĕçлет. Хăйĕн лашисене кăтартуллă пăхнисĕр пуçне, виçĕ çул хушшинче колхоза вăл сахал мар тихасем çитĕнтерсе пачĕ. Халь вăл 5 тиха пăхса çитĕнтерет.

Çуракине хатĕрленес ĕç районра уйрăмăнах Михайлов агроном участокĕнче лайăх пулса пырать. Ун участокĕнчи колхозсенче триерсем пурте таттисыпписĕр ĕçлеççĕ. Нумай колхозсем агротехникăна та вĕренсех пыраççĕ. Ку ĕçе Михайлов агроном хăй пуçарса пырать. Вăл тăрăшнипе çак иртнĕ кунсенче участокри агрокружокран 30 колхозник вĕренсе тухрĕ. Унсăр пуçне Михайлов юлташ агротехника ыйтăвĕсемпе 27 колхозра 87 калаçу туса ирттернĕ.

С. ИЛЬИН.

Вăкăрсене тата хĕсĕр ĕнесене ĕçлеме вĕрентеççĕ

Çуракине ăнăçлăн туса ирттерессине ĕç вăйĕ çителĕклĕ пурри татса парать. Çакна шута илнĕ «Звезда» колхоз (Красноармейски район) хăйне валли халех ĕç вăйĕ хатĕрлеме тытăнчĕ. Ку колхозра, лашасене лайăх пăхнипе пĕрлех, вăкăрсемпе хĕсĕр ĕнесене кӳлсе ĕçлеме вĕрентеççĕ.

Елчĕк районĕнчи «Правда» колхозра вăкăрсемпе хĕсĕр ĕнесене ĕçлеме вĕрентсе çитернĕ те ĕнтĕ, вĕсемпе халь колхозра ĕçлеççĕ. Çакнашкалах «Красный партизан» колхозра та 10 лаша вырăнче вăкăрсем ĕçлеççĕ.

М. ПРОХОРОВ.

Вăрлăхсем паха пулаççĕ

КУКЕÇ. «1-ое мая» колхозра кашни бригадăрах çуракине ăмăртса хатĕрленеççĕ. Çуракине хатĕрленес ĕç уйрăмах Кольцовка колхозникĕсен чĕнĕвне сӳтсе-явнă хыççăн лайăхланчĕ. Акана Хĕрлĕ Çар кунĕ тĕлне хатĕрленсе çитес тесе бригадăсем ăмăртăва тухрĕç, колхозниксем кашнинех татăклă ĕçсем тума пулчĕç. М. Григорьева, М. Андреева, А. Капитонова колхозницăсем вăрлăхсене сортлас ĕçе тăваççĕ. Хăйсен кашни кунхи ĕç нормисене вĕсем ытлашшипех тултарса пыраççĕ.

Вăрлăхсене сортлаççĕ çеç мар, чĕрĕ пулнă пирки вĕсене типĕтеççĕ, пахалăхне шăтарса пăхса тĕрĕслеççĕ.

Агротехникăна вĕренме халь кружок организацилерĕç. Кружока С. Григорьев агроном ертсе пырать. Колхозниксем тăрăшса вĕренеççĕ.

И. ВАСИЛЬЕВ.

Ĕç нормисене ирттерсе тултараççĕ

СĔНТĔР. Сĕнтĕр ялсоветĕнчи «Париж коммуни» колхоз членĕсем Кольцовка колхозникĕсен чĕнĕвне сӳтсе-явнă хыççăн çуракине хатĕрленес ĕçри çитменлĕхсене кĕске вăхăтрах пĕтерме пулчĕç. Колхозăн Хĕрлĕ Çар кунĕ тĕлне çуракине хатĕрленсе çитме пур майсем те пур. Вăрлăхсене клеверпа кантăр вăрлăхĕсемсĕр пуçне хатĕрлесе çитернĕ. Вĕсем типĕ вырăнта упранаççĕ. Вăрлăха сортлама 6 çынран, ялхуçалăх машинисене юсама 3 çынран уйрăм бригадăсем тунă. Вĕсем халĕ ĕçе тытăннă та ĕнтĕ.

Ытти колхозсенче те çуракине тимлĕн хатĕрленеççĕ. Юнга ялсоветĕнчи «Çĕнĕ Юнга» колхоз вăрлăхсене çак кунсенчех тасатса çитерет. Пăрçа йышши культурăсене алăпа сортлаççĕ. Шапкарти «Аврора» колхозра Е. Колбасова, О. Мерлова, П. Мерлова, Е. Шушкина колхозницăсем вăрлăхсем тасатас ĕçре хăйсен кулленхи нормисене 175—200 процент тултарса ĕçлеççĕ. Ялхуçалăх машинисене юсас ĕçре Г. Соколовпа Я. Соловьев колхозниксем аван ĕçлеççĕ. Колхозра халĕ çуракине хатĕрленме ĕç планĕ турĕç, звеносем организацилерĕç.

С. НАЛИМОВ.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

Чувашпромсоюзу
ТРЕБУЮТСЯ:
секретарь-машинистка
и завхоз.
АДРЕС: Чебоксары, ул. Ленина, дом № 6, 2-2 Телефон № 0-49.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редакци секретарĕн—4—25, пропагандăпа партии пурнăç пайĕн — 5—31, ялхуçалăх пайĕн — 3—99, «Ленин çулĕпе» журналăн тата комсомол пурнăç пайĕн — 0—85, издательств. конторин — 0—23.

НТ 377 Гор. Чебоксары, типографи № 1 Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ № 260. Ф: 6. 58 64 п: л: